5969

Кĕнеке хыççăн кĕнеке

А. С. ПУШКИН

ПАТШАН ВИЛНĔ ХĔРĔПЕ ÇИЧĔ ПАТТĂР

Хусанкай

ЧĂВАШГОСИЗДАТ . 1948

ПРОВЕРЕНО
19 9

59697

А. С. ПУШКИН

ПАТШАН ВИЛНЁ ХЁРЁПЕ ÇИЧЁ ПАТТĂР

ХАЛЛАП

Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького

ЧĂВАШГОСИЗДАТ
Шупашкар — 1949

П. Хусанкай куçарнă

Ўкерчĕкĕсем *П. Сизовăн*

Патша çул кайма шутларĕ,
Мăшрипе вăл сывпуллашрĕ.
Савнă мăшăрĕ пĕччен
Юлчĕ кантăк умĕнче.
Хирелле пăхса кункаçăн
Вăл кĕтсе ларать мăнтарăн;
Ир пуçлать те—çĕрлеччен
Тинкерет куç шариччен—
Курăнмасть юратнă тусĕ!
Юр кăна вĕçет чарусăр
Кăнтăрла та, каç та ир,
Шап-шурах выртать уй-хир.
Тăхăр уйăх иртсе кайрĕ,
Шав пăхма вăл чарăнмарĕ.
Ак, раштав ыран тесен,
Хĕр çуралчĕ ыр пикен.

Кунĕн-çĕрĕн кĕтнĕ хаклă
Ача ашшĕ те-мĕн акă
Килсе çитрĕ ирхине
Аякри çĕртен килне.
Патшана мăшри курайрĕ—
Ассăн, йывăррăн сывларĕ:
Тӳсеймерĕ телейне—
Вилчĕ кăнтăр тĕлнелле.

Нумайччен патша кулянчĕ.
Мĕн тăвайăн-ха? Лăпланчĕ.
Çын çынах: пĕр çул иртсен
Вăл авланчĕ çĕнĕрен.
Чăнласах та—çĕнĕ çынĕ
Çав патшашăнах-мĕн ӳснĕ:
Пӳлĕ, шурă та катмар,
Ăсĕпе те катăк мар.
Анчах кăмăлĕ пит çӳллĕ,
Хуçкаланчăк, кӳлешӳллĕ.
Ашшĕ-амăшĕ хĕрне
Тĕкĕр панă-мĕн парне,
Чĕрĕ тĕкĕр: этемлех-мĕн
Вăл пултарнă пуплемешкĕн.
Тĕкĕрпе кăна иккен
Хавасланнă çĕн инке,
Унпа çеç кулса йăпаннă,
Хăй сăнне пăхса каланă:
„Çутă тĕкĕрĕм! Кала,
Ним суймасăр, чăнпала:
Чи шурри, нĕрли, катмарĕ

Тĕнчере пĕр эпĕ мар-и?"
Калать тĕкĕрĕ ăна:
„Эс, пикеçĕм, эс кăна,
Пуринчен те эсĕ нĕрлĕ,
Шурă, хӳхĕм те илемлĕ".
Леш пуçлать ахăлтатма,
Хулпуççине вылятма,
Пӳрнипе шалтлать, мăнаçлăн
Çаврăнса тăрать хăяккăн,
Куç хĕсет, курнăçланать,
Темĕн те пĕр хăтланать...

Анчах леш ачи патшанăн
Ӳсрĕ-ӳсрĕ те сăпайлăн—
Ӳссе çитрĕ, пулчĕ хĕр,
Çеçкеллех илемлĕскер:
Куçхарши хура, хăй шурă,
Пит йăваш, каччи те пур ун:
Король ывăль Елисей
Кӳмелле хĕре телей.
Евчĕ çитрĕ, ашшĕ хĕрĕн
Кăмăлне татас темерĕ:
Çич хула парать, çине—
Çĕр те хĕрĕх керменне.

Ак амаçури хавассăн
Хĕртуйне пуçтарăнасшăн,
Тĕкĕр умĕн тĕркĕнет,
Капăрланнă май чĕнет:
„Чи шурри, нĕрли, катмарĕ

Тĕнчере пĕр эпĕ мар-и?“
Мĕн тет тĕкĕрĕ ăна?
„Эс илемлĕ, ку чăнах,
А патшан çураçнă хĕрĕ
Пуринчен те шурă, нĕрлĕ“.
Ялт сиксе ўкет пике,
Сулăнайрĕ аллипе—
Тĕкĕрне пĕррех вăл çапрĕ,
Урине хăй тăрăс тапрĕ:
„Ах, ăнманă кĕленче!
Мĕн суян куç умĕнчех?
Ман шая ăçтан вăл тăрĕ?
Эп ăна ухмахлантарăп!
Епле ўснĕ вăл иккен!
Шурринчен мĕн тĕлĕнен?
Пĕтĕ амĕш çĕрĕн-кунĕн
Юр çине пăхса та унăн!
Анчах эс кала: мĕнпе
Вăл паха ытти енпе?
Çак патшалăх урлă каçăн—
Ман пек хўхĕм тĕлпулаймăн,
Витĕр тухăн тĕнчене—
Эп илемлĕ пĕчченех.
Çапла мар-и, ма тунатăн?“—
Тет патша майри мăнаçлăн.
Пĕчĕк тĕкĕр пикене
Такмаклать хăй кĕввинех:
„А çапах та патша хĕрĕ
Пуринчен те шурă, нĕрлĕ“.
Ним тума та çук. Пике

Кĕвĕçет темскер пекех
Тĕкĕрне сакайне печĕ,
Хăйĕн тарçă хĕрне чĕнчĕ—
Хурамкка ятлăскерне.
Ак хушать çав хăрхăмне
Леш патша хĕрне васкавлăн
Вăрмана илсе каймашкăн:
„Çыхса яр,—тет,—айвана,
Кашкăр çитĕрех ăна“.

Арăм-терĕш çиленсессĕн—
Шуйттанпа та çĕнтерейменĕн:
Хурамкка патша хĕрне
Çавăтрех вăрман енне.
Пит шала вăл илсе кӳртрĕ,
Сисрĕ хĕр, хăраса ӳкрĕ.
„Ах, тăванăм, мĕн капла
Айăп турăм эп, кала?
Ан пĕтер мана, хĕр-тантăш,
Хам асла тухсан хăвна та
Ырă тăвăп малашне“.
Леш хĕрхенчĕ мĕскĕне.
Вĕлермерĕ те çыхмарĕ,
„Ан кулян,—тесе каларĕ,—
Кайччĕ турăпа пĕрле“.
Хăй уттарчĕ килнелле.
Патша арăмĕ тĕпчерĕ:
„Ну, ăçта çав чиперскерĕ?“
Хурамкки калать ăна:
„Тăрса юлчĕ вăрмана;

Аллине эп хытă çыхрăм,
Тискер кайăк—выçă хырăм—
Çисе ярĕ-çке часах,
Нумай курмĕ вăл асап".

Ак хыпар вĕçет: патшанăн
Хĕрĕ çук! Патша мăнтарăн
Шарт çапать ик пĕççине.
Король ывăль Елисей
Тур умне ўксе кĕл турĕ,
Тархасларĕ те вăл тухрĕ—
Кайрĕ вăрăм çул-йĕре
Шырамашкăн сар хĕре.

А патша хĕрĕ аташрĕ,
Вăрмантах вăл çĕр те каçрĕ;
Утрĕ-утрĕ, ир енне
Çитрĕ вăл пĕр кермене.
Ăна хирĕç тухрĕ анчăк,
Вĕркелерĕ те лăпланчĕ.
Сар хĕр кĕчĕ хапхинчен,
Сас та çук карташĕнче.
Йăпăлти йытти ун хыççăн
Çăрхалать, чупать хавассăн.
Хĕр хĕстерчĕ кĕпине,
Улăхать пусма çине.
Ункине тытса туртайрĕ—
Алăк яр уçăлса кайрĕ.
Шурă курницаналла
Хĕр кĕрсе тăрать шала.
Саккисем тăрăх кавир-мĕн,

Кăмаки эрешлĕ-пирлĕ.
Турăшсем ларан тĕлте—
Сарлака юман сĕтел.
Хĕр сăнарĕ те пĕр тапхăр,
„Ыр çынсем пурнаççĕ, ахăр,
Усал тумĕç халĕ“—тет.
Анчах çук пĕр чунĕ те.
Хĕр çуртра шыранкаларĕ:
Йĕркелерĕ, шăлкаларĕ,
Çурта çутрĕ тур умне,
Хутрĕ вăл кăмакине,
Хăй сентре çине хăпарчĕ,
Пӳ-сине пăртак кантарчĕ.

Çывăхарчĕ кăнтăр та,
Тĕпĕр-тепĕр ак тулта:
Килчĕç кĕчĕç çичĕ паттăр,
Пурте мăйăхлă та капăр.
„Тамаша-çке!—тет асли,—
Пирĕн çурт кун пек чысли
Халиччен пит паллă марччĕ.
Кам-ши тăрăшрĕ, пуçтарчĕ?
Кам эс? Тух, тӳррипелен
Туслашсам пирĕнпелен:
Шур сухалла çын пулсассăн—
Эс пире мучи пулатăн.
Хĕрлĕ питлĕ яш пулсан—
Эс пире кĕçĕн тăван.
Карчăкрах пулсан—аннемĕр
Пулăн эс, çаплах чĕнетпĕр.



Сарă хĕр пулсан—вара
Йăмăк пул пурсăмăра".

Патша хĕрĕ илтрĕ, анчĕ,
Чыс туса салам вăл пачĕ.
Вăтанса, хуçасене
Хушрĕ хăйĕн сăмахне:
„Йыхăрман та—ан ӳпкелĕр—
Хăнана килсеттĕм"—терĕ.
Хуçасем патша хĕрне
Пĕлчĕç калаçнинченех;
Кĕреке варнех лартаççĕ,
Кукăльпе ăна чыслаççĕ;
Туп-тулли çут черккине
Лартрĕç çут патнус çине;
Эреххи çиçсе вылярĕ,
Хĕр эрех ĕçме тумарĕ.
Кукăльне кăна хуçса
Йăла турĕ тутанса.
Çул килсе ывăннăскерĕн
Çыврасси те килнĕ хĕрĕн.
— Выртма пулмĕ-ши?—тесе
Ыйтрĕ сар хĕр, именсе.
Паттăрсем пит хапăлларĕç:
Пикене вырăнаçтарчĕç
Пĕчченех пĕр пӳлĕмне,
Пуринчен те çӳлтине.

Кун та иртрĕ, çĕр те иртрĕ—
Вăрмантах-ха патша хĕрĕ.

Кичем мар ăна пĕччен
Çичĕ паттăр патĕнче.
Шурăмпуçĕ хăпарсассăн
Тăван ушкăнĕ хавассăн
Ут ютланса кустарать,
Кăвакал пеме тухать,
Сылтăм алă вылятмашкăн
Тĕрĕке çуранлатмашкăн,
Е çара тутар пуçне
Хĕçпеле татмашкăн, е
Пилĕк Ту черкесĕ хыççăн
Вăрман витĕр ыткăнмашкăн.
Керменре никам та çук—
Хĕр кăна хуçа унчух:
Хатĕрлет вăл апат-çимĕç,
Пуçтарать, шăлать, хăй хирĕç
Пĕр сăмах та каламасть,
Лешсенчен те çук пĕр сас.

Çаплалла кунсем пуçланчĕç,
Тăвансем хĕре юратрĕç.
Ак пĕрре ун пулĕмне
Илĕм-тилĕм ирхине
Çичĕ паттăр улăхайрĕ,
Чи асли çапла каларĕ:
„Ху пĕлетен, хĕр: пире
Йăмăк эс çичсĕмĕре.
Сана çиччĕн, çичĕ паттăр
Пурте хытă юрататпăр;
Савăнсах кашни качча

Илмелле сана, анчах
Юрамасть ун пек тумашкăн,
Килĕштер пире тархасшăн:
Арăм пул пиртен пĕрне,
Йăмăк пул ыттисене.
Мĕншĕн эс пуçна суллатăн?
Е пире кăмăлламастăн?
Е ытла паха тавар
Пирĕн пек хуçашăн мар?

„Эй эсир, ыр йĕкĕт-паттăр,
Пурте ман пичче пулатăр,—
Тет пике хĕр вĕсене:—
Улталап пулсассăн эп,
Аçа, çап мана, вĕлерччĕ!
Анчах эп—çураçнă хĕр-çке.
Маншăн пурсăр та маттур,
Пурте ăслă та сатур,
Чунтанах сире юратрăм
Анчах урăх манăн каччăм:
Король ывăль Елисей
Кӳмелле мана телей".

Тăвансем шăпах тăраççĕ,
Ĕнсине кăна хыçаççĕ.
Асли тайăлчĕ: „Каçар,
Пиртен тухнă йăла мар.
Тек çăвар та уçмăп çукшăн".
„Çиленместĕп эпĕ уншăн,
Айăп тумăр чăн çинчен",—

Терӗ сарӑ хӗр хуллен.
Каччӑсем ӑна пуç тайрӗç,
Ерипен тухса саланчӗç.
Каяллах ӗлӗкхилле
Килӗштерчӗçӗ пӗрле.

А лере хайхи патшанӑн
Çӗнӗ арӑмӗ манман-мӗн
Хӑйӗн тӗкӗрӗ çинчен:
Пикене аса илсен
Пит çиленнӗ, вӗчӗрхеннӗ,
Çав паян ун асне кӗнӗ,
Ак вӑл тӗкӗрӗн умне
Пычӗ, манчӗ çиллине,
Капӑрланчӗ, пӑхкаларӗ,
Хӑй кулса çапла каларӗ:
„Сыв-и, тӗкӗрӗм! Кала,
Ним суймасӑр, чӑнпала:
Чи шурри, нӗрли, кагмарӗ
Тӗнчере пӗр эпӗ мар-и?“
Калать тӗкӗрӗ: „Чӑнах,
Эс илемлӗскер, анчах
Вӑрманта пур çичӗ паттӑр,
Çавсемпе ним сумсӑр-чапсӑр
Çамрӑк хӗр пурнать пӗччен,
Вӑл çапах санран чечен“.
Патша арӑмӗ шӑртланчӗ,
Хурамкка çине вӑсланчӗ:
„Эс мана суйма-и?!“ тет.
Леш тунмарӗ нимӗн те,

Йĕркипе йăлтах каларĕ.
Патша арăмĕ хăратрĕ
Хăрхăмне пуç яраспа,
Хăйне турĕ вăл тупа:
„Е хĕр-çуррине пĕтерĕп,
Е пуça эп çийĕп!“—терĕ.

Патша хĕрĕ пĕр кунне,
Кĕтсе çичĕ пиччĕшне,
Кантăк умĕн сӳс арларĕ,
Кĕç йытти вĕре пуçларĕ.
Хĕр курать: карташĕнче
Хуратум çӳрет пĕччен—
Çипуçпа манах, ват карчăк,
Туйипе йытта хăмсарчĕ.

„Чим, тăхта-ха, асанне!—
Кăшкăрать хĕр хайхине.—
Йыттине хамах эп чарăп,
Час хăвна та çăкăр парăп“.
Хуратум калать ăна:
„Ах, илемлĕ хĕрача!
Йытă-çке çак хупăрларĕ,
Чут кăна çисе ямарĕ.
Ха, епле вăл хамлатать!
Тух-ха эсĕ ман пата“.
Хĕр тухасшăн çăкăр касрĕ,
Анчĕ çех, ярса пусайрĕ,—
Йытă пӳлчĕ ун çулне,
Шит ямасть карчăк патне.
Ярса çех пусать ват карчăк—

Чувашская
Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. Н. Горького

Хар сиксе пырать йыт-анчăк,
Кашкăртан та вăл хаяр.
Мĕн тĕлне ку? Паллă мар.
„Çывăрса тăранайман-тăр,—
Тет пике хĕр.—Ме ак çăкăр!“
Карчăк тытрĕ çăкрине.
„Тавтапуç,—тет пикене,—
Турă ырлăх-сывлăх патăр,
Ме-ха кучченеç хăвна та!“
Патша хĕрĕ патнелле
Карчăк пĕр тĕлĕнмелле
Панулми вăркăнтарайрĕ...
Йытă сикрĕ, нăйăклатрĕ...
А пике хĕр улмана
Ячĕ тытрĕ. „Тутанах,
Çи пăртак пĕччен ларуçăн,
Çăкăрушăн—таймапуçам“,—
Терĕ карчăк, хăй пачах
Куçран çĕтрĕ çавăнтах.
Пике çумĕн чупрĕ йытă,
Куçĕнчен пăхать вăл хытă,
Хĕрхенет те тилмĕрет,
Тем систернĕ пек вĕрет.
Тен, хăй чĕлхипе çав мĕскĕн
„Улмуна пăрах!“ теесшĕн.
Хĕр пăхать йытти çине,
Ачашлать вăл йыттине.
„Мĕн, Саккулăм, мĕскер пулчĕ?
Вырт!“ тесе вăл алă сулчĕ.
Хай кĕрейрĕ пулĕмне,

Кĕлелерĕ алăкне;
Арсене кĕтсе, аранчă
Арлама тесе вăл ларчĕ.
Анчах куçĕ халь пикен
Илĕнмест улма çинчен.
Ну, улми те! Пулмаллах вăл
Пулнă, çитĕннĕ пуль çавă:
Сим-сĕткен тапса тăрать,
Ыр шăрши йĕри-тавра,
Ялкăшать вăл темĕн тĕрлĕн—
Çутă ылттăнăн та хĕрлĕн,
Пыл тултарнă пек варри,
Витĕрех курнать вăрри.
Апатчен çиес темерĕ,
Пăхрĕ-пăхрĕ, тусеймерĕ:
Тытрĕ те хĕр улмине—
Çĕртĕнтерчĕ тутине,
Ерипен ăна вăл çыртрĕ,
Пĕчĕкçеççĕ татăк çăтрĕ...
Ак сасартăк сарă хĕр
Пулчĕ ларчĕ сывлăшсăр.
Улми ўкрĕ, хĕр сулланчĕ,
Аллине вăл усса ячĕ;
Хупрĕ, хупрĕ те куçне—
Тўнчĕ кайрĕ тур умне,
Сак çине пуçне хурайрĕ—
Урăх пĕртте хускалмарĕ...

Çичĕ паттăр пĕртăван
Таврăнаççĕ вăрçăран.

Сас-чĕвве илтейрĕ анчăк—
Уласа вĕрсе те ячĕ,
Хирĕç тухрĕ, чупкалать,
Килнелле çул кăтартать.
„Ырра мар ку, хурлăха-тăр“,—
Терĕç харăс çичĕ паттăр.
Çитрĕç, курчĕç, тĕлĕнчĕç.
Йытă сикрĕ, ыткăнчĕ,
Улмана хăр-хар вăл хыпрĕ,
Çăтсанах тăсăлса выртрĕ:
Ун ăшне иккен юри
Янă наркăмăш пĕри.
Вилнĕ хĕр тавра салхуллăн
Çич тăван тăрать пĕр чунлăн—
Кулянаççĕ пуç усса,
Вара, шăппăн кĕлтуса,
Сак çинчен хĕре çĕклерĕç,
Тумлантарчĕç, тирпейлерĕç,
Шухăшларĕç пытарма,
Анчах пулчĕç тăхтама.
Çар хĕр лăпкăн та сăпайлăн,
Ăшă ыйхă çупăрланăн,
Выртрĕ чĕрĕ çын пекех,
Палăрмасть сывлани çех.
Виçĕ кун, виç каç тăхтарĕç—
Патша хĕрĕ вăранмарĕ.
Тумаллах пулать йăла:
Кĕленче тупăкпала
Хĕр ýтне йăтса каяççĕ,



Хăвăл ту ăшне лартаççĕ;
Çурçĕрте çав тупăка,
Сăнчăрпа çыха-çыха,
Ултă юпаран кăкарчĕç,
Решетке тытса хăварчĕç.
Вилнĕ йăмăкĕ умне
Асли тайрĕ те пуçне,
Кулянса çапла каларĕ:
„Канлĕ çывăр. Çын хаярĕ
Кун памарĕ чипере,
Чуну пулĕ пĕлĕтре.
Эс ытараймиччĕ пирĕн,
Упрасаттăмăр савнишĕн—
Тăрса юлтăн хурлăха,
Кĕрсе выртрăн тупăка“.

Çав кунах амаçури,
Ыр хыпар кĕтсе, юри
Вăрттăн тытрĕ тĕкĕрне,
Хушрĕ хăйĕн сăмахне:
„Чи шурри, нĕрли, катмарĕ
Тĕнчере пĕр эпĕ мар-и?“
Калать тĕкĕрĕ ăна:
„Эс, пикемĕр, ку чăнах,
Пуринчен те эсĕ нĕрлĕ,
Пуринчен те шурă, хĕрлĕ“.

Король ывăль Елисей
Тĕнчипех çӳрет вĕçсе,
Ут çинчен ана пĕлмерĕ:

Çĕтнĕ-çке ун савнă хĕрĕ.
Вăл йĕрет те хурланать,
Курнинчен пĕр ыйткалать.
Çынсем пурте тĕлĕнеççĕ,
Ыйтнине чухла пĕлмеççĕ,
Хăшĕ куçăн мăшкăллать,
Хăшĕ кутăн çаврăнать.
Тĕнче касрĕ йĕкĕт, касрĕ,
Хĕвеле вăл тархасларĕ:

„Кун çуттийĕмĕр хĕвел!
Кĕр те, çур та, çу та хĕл
Пĕлĕтре эс кустаратăн,
Йăлт пире курса тăратăн.
Çамрăк çеç чипер хĕре
Эс курман-и тĕнчере?
Пĕлтерсемччĕ, каласамччĕ,
Эп—ăна çураçнă каччă".
Тавăрать ăна хĕвел:
„Ырă каччă, питĕ шел,
Анчах эп хĕрне курмарăм.
Вилнĕ пулĕ вăл, мăнтарăн.
Манăн кӳршĕм уйăх, тен,
Курнă пулĕ пĕлĕтрен.
Тен, йĕрне сăнанă пулĕ
Пикӳнне вăл пĕр каç кӳлĕм".

Хуйха ӳкнĕ Елисей
Сĕм каça илет кĕтсе.
Çутă уйăх курăнайрĕ—

Уйăха вăл тархасларĕ:
„Уйăх, ылттăн мăйракам!
Манпалан эс тус пулсам.
Тĕттĕмре эс хăпаратăн
Çавра питлĕн, йăл кулатăн.
Çăлтăрсем, сана савса,
Тинкереççĕ сăхланса.
Çамрăк çеç чипер хĕре
Эс курман-и тĕнчере?
Пĕлтерсемччĕ, каласамччĕ,
Эп—ăна çураçнă каччă".
Çутă уйăх пĕлтерет:
„Пикене курмарăм,—тет,—
Кам пĕлет? Эп хуралта та
Черетпе кăна тăратăп.
Çар хĕр эпĕ çук чухне
Чупса иртрĕ пулинех".
Елисей пуç усрĕ: „Хурлăх!"
Малалла каларĕ уйăх:
„Чим-ха, çил пĕлмест-и, тен,
Çав чипер пике çинчен.
Çил патне кустар эс, каччă,
Ан кулян-ха, сывпулсамччĕ".

Елисей—çил патнелле,
Йăлăна пуçлать çиле:
„Çилĕм, çилĕм! Эс хăватлă,
Шурă пĕлĕте хăватăн,
Тинĕсе эс хумхатан,
Пур çĕре те çул тытан,

Никамран та хăрамастăн,
Турăран кăна хăратăн.
Çамрăк çеç чипер хĕре
Эс курман-и тĕнчере?
Пĕлтерсемччĕ, каласамччĕ,
Эп—ăна çураçнă каччă".
„Чим-ха,—терĕ çил ĕçчен,—
Лăпкă шывăн леш енче
Чăнкă ту ларать пит çӳллĕ,
Унăн ăшĕ хăвăл пулĕ;
Çавă тĕттĕм хăвăла
Ултă хут сăнчăрпала
Сăнчăрланă тупăк çакнă,
Юпаран ăна кăкарнă,
Тупăк пулĕ кĕленче,
Сар хĕр выртĕ ăшĕнче".

Çил хăй çулĕпе кустарчĕ.
Король ывăль йĕчĕ ячĕ.
Кайрĕ вăл çав çĕрелле,
Хӳхĕм хĕрĕ çинелле
Тепре çеç пăхса илесшĕн.
Ак пырать; ун куçĕ умĕн
Чăнкă ту тăра парать,
Пуш-пушах çĕр ун тавра.
Ту хĕрри чăнах та хăвăл,
Васкаса кĕрсе каять вăл.
Ак—сĕмре кăшт курăнать—
Хайхи тупăк сулланать.
Тупăк ăшĕнче пике хĕр—

Çывăрса каяйнă евĕр.
Каччă тупăк çумнелле
Çапăнать вăйĕпеле.
Тупăк çĕмрĕлчĕ, сасартăк
Чĕрĕлет пике. Пĕр авăк
Тĕлĕнсе вăл пăхкалать,
Сăнчăр çийĕн ярăнать.
Ассăн сывласа илейрĕ:
„Вăрăм пулнă ыйхăм!"—терĕ.
Ак тăрать вăл тупăкран...

Ах!.. Пĕрне-пĕри курсан
Иккĕш те йĕрсе яраççĕ.
Хăй хĕрне йăтать те каччă
Тĕттĕмрен илсе тухать,
Ăш сăмах ăна хушать.
Калаçаççĕ, савăнаççĕ,
Киле майăн çул тытаççĕ.
А хыпар часах вĕçет:
Патшан хĕрĕ сывă, тет!
Килĕнче хайхи ăнманă
Çав самант пĕр ĕçсĕр ларнă,
Хăйĕн тĕкĕрĕпеле
Калаçса, ĕлĕкхилле:
„Чи шурри, нĕрли, катмарĕ
Тĕнчере пĕр эпĕ мар-и?"
Калать тĕкĕрĕ ăна:
„Эс илемлĕ, ку чăнах,
А çапах та патша хĕрĕ
Пуринчен те хŭхĕм, нĕрлĕ".

Урнă арăм тĕкĕрне
Çат тугарчĕ урайне,
Алăкран чупса тухайрĕ,—
Пикене курах вăл кайрĕ.
Тӳсеймерĕ тек: часах
Чунĕ тухрĕ кулянса.
Арăмне патша чикейрĕ—
Хĕр туйне те хатĕрлерĕ.
Елисей ача тинех
Илчĕ хăйĕн савнине;
Тĕнче пулнăран вара та
Унашкал ĕçкĕ курман-тăр;
Эп те ĕçрĕм пыл-сăра,
Мăйăх халь те сап-сарах,
Анчах темĕншĕн вара
Лекеймерĕ çăвара.

59697



Редактор *Гр. Краснов*
Техн. редактор *И. Григорьев*

НТ 05144. Подписано к печати
20/XI-48 г. Зак. № 1932.
Тир. 5000. Объем 1,0 п/л.

Типография № 1 Управления
полиграфпромышленности при
Совете Министров ЧАССР

Город Чебоксары,
ул. Володарского, 5